Сывлăх сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе

# Çĕнĕ техника чылай килчĕ

***Пирĕнтен чылайăшĕ патшалăх халăх сывлăхĕ çине пысăк тимлĕх уйăрнине туйĕ пулĕ. Районти тĕп больница тата сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсем ырă енне улшăннине вĕсене çĕнĕ йышши оборудованисемпе пуянлатнинчен те куратпăр, васкавлă пулăшу машинисем те çĕнелчĕç. Çак ырă улшăнусем наци проекчĕпе тачă çыхăннă. Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм эпĕ районти тĕп больницăн тĕп врачне тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне В.Г. ДАНИЛОВА.***

**– Владислав Григорьевич, "Сывлăх" наци проекчĕ сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенче мĕнле пурнăçланса пырать?**

– "Сывлăх" наци проекчĕ тăватă енлĕн ĕçлесе пырать. Чи малтанах сывлăха сыхлас ĕçри пуçламăш звенона пысăк тимлĕх уйăрнине палăртмалла. Январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа участокри терапевтсен, педиатрсен, пĕтĕмĕшле практика врачĕсен ĕç укçине ӳстерме май пачĕ. Районта вĕсем пурĕ 53-ĕн. Çак тĕллевпе 4 миллион та 500 пин тенкĕ укçа килнĕ. Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа фельдшерпа акушер пункчĕсенче, "васкавлă пулăшу" уйрăмĕсенче тăрăшакансене тӳлеме хушма укçа 1 миллион тенкĕ килчĕ. Çак категорие кĕрекенсем те 53-ĕн. Паллах, ĕç укçине ӳстерни лайăх. Çавăнпа танах медицина пулăшăвĕн эффективлăхне, пахалăхне хăпартмалла, пуçламăш тапхăрта чирĕн диагнозне лартма пĕлмелле. Пĕтĕмĕшле каласан, вĕсен тĕрĕс ĕçлекен медицина ĕçченĕсем пулмалла.

Иккĕмĕш енĕ йывăр çын хĕрарăмсене сертификатсемпе тивĕçтерес тĕлĕшпе пурнăçланать. Çак тĕллевпе района 904 пин тенкĕ укçа кусса килнĕ. Ăна чи малтанах ача çуратмалли çуртра ĕçлекенсен ĕç укçине ӳстернĕ çĕрте усă кураççĕ. Унти медицина оборудованине, медикаментсемпе инвентарьсем туяннă çĕре тата лаборатори тĕрĕслевĕ валли уйăраççĕ.

Наци проекчĕн виççĕмĕш енĕ бюджет сферинче вăй хуракан 35-55 çулсенчи çынсене хушма диспансеризаци витĕр каларасси пулчĕ. Çавăн пекех сывлăхшăн сиенлĕ факторсемпе ĕçлекенсене хушма медицина тĕрĕслевĕ ирттертĕмĕр. Пĕтĕмĕшле вара 1500 çын хăйсен сывлăхĕсене тĕплĕн тĕрĕслеме пултарчĕ. Çак ĕçе пурнăçлама хушма укçа уйăрчĕç.

Тăваттăмĕш енĕ вăл – тĕрлĕ чиртен сыхланас ĕçре вакцинăсемпе усă курасси. Çак тĕлĕшпе 1 миллион та 500 пин тенкĕлĕх вакцина кӳрсе килтĕмĕр. 18 çула çитиччен-хи 4 пин те 500 ачана В гепатитран виçшер хут прививка тунă. Грипп чирĕнчен вĕрентӳ учрежденийĕсенчи 3 пин ачана прививка тума ĕлкĕрнĕ. Çавăн пекех хĕрлĕ шатра чирĕнчен те вăхăтра прививкăсем тунă. Халĕ çак ĕçе малалла тăсатпăр, ăна валли 12 ушкăн йĕркеленĕ. Вĕсем оперативлă, йĕркеллĕ ĕçлесе пыраççĕ. Кăçал 5 пине яхăн 17-35 çулхи çынсене В гепатит чирĕнчен прививка тума палăртнă. Паллах, çак ĕçе наци проекчĕ йĕркеллĕ ĕçлесе пынăран пурнăçлама пултартăмăр.





**– Çĕнĕ йышши оборудованисене туянма мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрнă?**

– Çĕнĕ йышши оборудовани туянма наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 5 миллион та 499 пин тенкĕ уйăрнă. Çав шутран лаборатори оборудованийĕн 2 комплектне кӳрсе килнĕ. 300 пин тенкĕ тăракан портативлă пĕр УЗИ аппарачĕ те чирлисене тĕрĕслеме питĕ меллĕ. Çавăн пекех Японире туса кăларнă 2 миллион та 245 пин тенкĕ тăракан рентген аппарачĕ, 1 миллион та 162 пин тенкĕллĕ стационарта усă курмалли икĕ УЗИ аппарачĕ туянтăмăр. Çак çĕнĕлĕхсем граждансене халĕ урăх хуласене тухса çӳремесĕрех пахалăхлă медицина пулăшăвĕ илме май параççĕ. Автомашинăсене çĕнетни медицина ĕçченĕсемшĕн те, чирлисемшĕн те питĕ меллĕ. "Васкавлă пулăшу" 3 автомашини пĕтĕм комплекчĕпе килсе çитрĕ. Çавăн пекех тепĕр 3 машина республика программипе килĕшӳллĕн Пĕтĕм тĕнчери аталану банкĕ урлă уйăрчĕç. Çакăн йышши çĕнĕлĕхсем пама пултарчĕ пире "Сывлăх" наци проекчĕ. Ку таранччен çапла пысăк пулăшу пулманччĕ-ха. Наци проекчĕ пире чăннипех савăнтарчĕ темелле. Унпа килĕшӳллĕн пама шантарнă укçа-тенкĕ, оборудовани пурте тĕрĕс-тĕкел килсе çитрĕç. Апла пулсан пирĕн усă курма, ĕçлеме пĕлмелле. Явап-лăха туйса çынсен сывлăхне çӳллĕ шайри ăсталăхпа тĕрĕслемелле тата сыхламалла. Ĕçе чунпа парăнсан кăна ăнăçу пулĕ.

2007 çулта "Сывлăх" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пирĕн района 7 миллиона яхăн укçа уйăрма палăртнă. Ку вара 2006 çулхинчен самай пысăк. Ăна пирĕн тĕллевлĕ ĕçсемпе çирĕплетмелле. Пирĕн çынсен сывлăхĕ çирĕп пулни, вĕсен кун-çул вăрăмăшĕ, пахалăхĕ, демографи лару-тăрăвĕ ырă енчен палăрмалла.

**– Демографи тенĕрен, ку лару-тăру ырă енне улшăнни палăрать-и?**

– Чăнах та, эпир ăна туйма пуçларăмăр. Тен, çакă ашшĕ-амăшĕн капиталĕпе те çыхăннă пулĕ. Патшалăх ачасене çуратма тата пăхса çитĕнтерме чылай условисем туса парать.

Сăмахран, çемьере иккĕмĕш ача çуралсан 250 пин тенкĕ уйăраççĕ. Ача çуралсанах 8 пин тенкĕ параççĕ тата ачана çул-талăк çурăччен пăхса çитĕнтернĕшĕн уйăхсерен пĕрремĕш ачашăн 1500 тенкĕ, иккĕмĕшĕшĕн 3000 тенкĕ параççĕ, амăшĕ ниçта та ĕçлемест пулсан та.

Акă, январь уйăхĕнче районта 31 ача çуралчĕ те ĕнтĕ. Малалла вĕсен йышĕ нумайланса пырасса шанатпăр. Мĕншĕн тесен çамрăк "калчасенче" çутă малашлăха тата пуласлăха куратпăр. Чи кирли вара, çут тĕнчене килнĕ чун çирĕп, йĕркеллĕ çемьере ӳсме тивĕç. Эпир вĕсене укçашăн мар, телейлĕ кун-çул пултăр тесе пурнăç парнелетпĕр. Ача çулталăкĕ пуриншĕн те ырă йĕр хăварасса шанас килет. Сисетпĕр ĕнтĕ демографи лару-тăрăвне лайăхлатас, ача çуратассине ӳстерес, халăх йышне сыхласа хăварас тĕллевпе Раççей Президенчĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пуçарусем тунине.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Ача çулталăкĕ

# Ача-пăча – çемье телейĕ

Кăçалхи çула Н.В. Федоров Президент Ача çулĕ тесе палăртрĕ. Çакă чи малтан ачасем ӳстерес, вĕсен сывлăхне сыхласа хăварас, пурнăçне çутăрах, ăс-хакăл енчен пуянрах тăвас тĕлĕшпе çыхăннă. Апла пулсан ку чĕнӳ кашни çыншăн социаллă пĕлтерĕшлĕ килме ĕлкĕрнĕччĕ. Эпĕ хама интереслентерекен амăш капиталĕ çинчен пуçартăм калаçăва.

– Паллах, эпир ачана укçашăн кун çути парнелемен. Çапах та çамрăк çемьесем çине тимлĕх уйăрни савăнтарать. Ачасемшĕн тата амăшĕшĕн ытларах шутла-



пулмалла.

Ачасем çине тимлĕх уйăрни уйрăмах кăмăллă. Акă, çулталăк пуçланнипе танах ырă утăмсем вăя кĕме пуçларĕç: ача сачĕшĕн тӳлеме компенсаци, пособисен калăпăшĕ ӳсни, амăш капиталĕ вăя кĕни тата ыттисем те. Патшалăх амăш капиталне çамрăк çемьесене пулăшу парас тĕллевпе уйăрать. Ăна тивĕçлисем февраль уйăхĕн çуррине районта 17 амăшĕ шутланнă. Вĕсенчен пĕринпе, Муркаш салинче пурăнакан Ольга Геннадьевна Мартыновапа калаçма шутларăм эпĕ.

Февралĕн 12-мĕшĕнче çамрăк çемьере иккĕмĕш ача Руслан çуралать. Çĕнĕ кайăк çут тĕнчене килни пурне те хавхалантарать. Уншăн вара уйрăмах тăватă çулти Данил савăнать. Ара, унăн халĕ пĕчĕк шăллĕ пур-çке. "Солнышко" ача садне çӳрекенскер, килне таврăнсан ăна выляттарма, теттесемпе илĕртме пуçлĕ. Телейлĕ ашшĕ, Андрей Владимирович, Пенси фончĕн районти уйрăмне амăш капиталĕн тивĕçлĕ документĕсем пирки çитсе ма пуçланă пек туйăнать. Руслан виçĕ çула çитсен, 250 пин тенкĕпе усă курма май пулсан, ăна эпир çурт-йĕр лайăхлатма уйăрнă пулăттăмăр, – пулчĕ хурав çамрăк мăшăрăн.

Çитес вăхăтрах вара Мартыновсен çемйи "Çамрăк çемье" программăпа туяннă çĕнĕ хваттере куçĕ.

– Кашни çыннăн пурнăçри тĕп тĕллевĕ хваттер е çурт çавăрасси пулса тăрать. Çавăнпа та хамăр çемье йăвине çавăрассинче çак программа пирĕншĕн пысăк пулăшу пулчĕ, – терĕ Андрей Владимирович ывăлне çумнерех тытнă май.

Ольга Геннадьевна Муркаш райповĕн "Радуга" кафере ĕçленĕ, халĕ пĕчĕк ачисене ӳстерет. Андрей Владимирович водитель-экспедитор пулса вăй хурать. Çамрăксене ĕçре ăнăçу, пĕрлехи çемье пурнăçĕнче çутă малашлăх сунар.

**Р. МАКАРОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Муркаш ялĕнчи Мартыновсен çемйи.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


6 марта с 9 до 11 в РДК
СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ
1500; 1700; 2950; 3150 руб.
и УЛЬТРАЗВУКОВЫЕ
СТИРАЛЬНЫЕ МАШИНКИ по ЦЕНАМ ЗАВОДА
850; 1495; 2150; 2500; 3300 руб.
НОВИНКА - "Антисон за рулем"
ПОДАРОК - каждому! СКИДКИ - пенсионерам!
ЗАЩИТИТЕ СЕБЯ от ПОДДЕЛОК!
ПОКУПАЙТЕ У ОФИЦИАЛЬНОГО ПРЕДСТАВИТЕЛЯ ЗАВОДА
ТРЕБУЙТЕ ГОЛОГРАММУ НА ИЗДЕЛИЯХ!
(3412) 45-58-55, 8-922-682-95-00
www.bionikaplus.ru
Товар сертифицирован

**Фирма «ООО Бионика +» представляет следующую продукцию: слуховые аппараты по ценам завода-изготовителя 1500, 1800, 2950, 3150 и 6000 руб. производства России, Германии, Прибалтики.**

**А также ультразвуковые стиральные машинки порядка 10 моделей по ценам 1200, 1495, 2150, 2500, 3300 руб. производства Смоленска, Кирова, Чистополя, Москвы. Разница по сравнению с другими машинками: малогабаритная машинка, вес всего 200 гр.! Стирает в емкостях любого объема. При любой температуре воды! Просто опустите машинку в таз или ванну, наполненную бельем, и оно будет чистое! Стирает любые, даже габаритные вещи (одеяло, пальто, пуховик и т. д.), а также детское белье. Белье не мнется, не деформируется, нет катышков, можно стирать даже самые деликатные ткани. Экономична, потребляет электроэнергию 3 Вт!!! За 3 часа работы счетчик наматывает всего 4 копейки. Отбеливает белье без кипячения. Очищает ткань внутри волокон, выводит пятна! Дезинфицирует воду, белье, овощи, фрукты. Отпугивает мышей, крыс и других грызунов.**

**У нас действует скидка до 25 % пенсионерам, инвалидам, ветеранам! Застрахуйте себя от подделок - требуйте голограмму на изделиях!!! Покупайте у официального представителя завода!!! Выставка-продажа будет проходить 6 марта с 9 до 11 ч. в РДК.**

**Апрель вĕçĕнче 7-мĕш пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп.**
**Тел.: 2-24-12.**

**Спутниковое телевидение от 21 до 1200 каналов. От 5 тыс. рублей, с установкой.**
**Тел.: 8-906-385-29-30, 8-927-666-93-95, 2-18-48 (после 18 часов). 5-5.**

**Продаем солому тюкованную с доставкой. Цена договорная.**
**Тел.: 8-906-134-16-47, в любое время. 3-3.**

**Продаю лесопиломатериал. Марий Эл. Документы, чеки предоставляем.**
**Тел.: 8-905-379-01-02. 3-10.**

**Сĕт-çу заводне хирĕç вырнаçнă йышăну пунктĕнче ĕне выльăх, вăкăр тирĕсене пĕр килограмшăн 32 тенкĕпе йышăнаççĕ. Тата хур е кăвакал тĕкĕсене туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 3-3.**

**Продаем цемент М-400, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид 15метровый. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.**



**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

**Заместитель главного редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3852.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 01.03.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.